Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

30 (7561) № * Шăмат кун, 2008 ҫулхи апрелĕн (ака) 19-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Тĕнче кубокĕ ҫывхарать

Ытлари кун ЧР Президенчĕ Николай Федоров Мускавра Федерацин физкультурăпа спорт агентствин ертӳҫипе Вячеслав Фетисовпа тата Пĕтĕм Раҫҫейри ҫăмăл атлетика федерацийĕн президенчĕпе Валентин Балахничевпа курнăҫнă.

Тĕл пулу вăхăтĕнче хăвăрт утакансен Тĕнче кубокне хатĕрленсе ирттерес ыйтусене сӳтсе явнă.

## Яла аталантарассипе

Юн кун ЧР Президенчĕ Николай Федоров Мускавра РФ ял хуҫалăх министрĕпе Алексей Гордеевпа тата «Россельхозбанк» правленийĕн председателĕпе Юрий Трушинпа тĕл пулнă.

Тĕл пулура республикăри агропромышленноҫ комплексĕ валли бюджетран укҫа уйăрассипе, ялăн социаллă аталану программисене пурнăҫлассипе, ҫурхи уй-хир ĕҫĕсемпе ҫыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

## Молдова посолĕ пулчĕ

Кĕҫнерни кун пирĕн республикăна Молдова Республикин Раҫҫей Федерацийĕнчи Чрезвычайлă тата Полномочиллĕ Посолĕ Василе Стурза пулнă.

Вăл ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕпе Сергей Гапликовпа тата правительствăн членĕсемпе тĕл пулнă. Промышленноҫ тата ял хуҫалăх предприятийĕсене ҫитсе курнă.



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Суворов ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуҫалăхри сысна фермин заведующийĕ Любовь Львовна Яковлева иртнĕ ҫул итогĕсемпе «2007 ҫулхи чи лайăх ферма заведующийĕ» ята илме тивĕҫ пулчĕ. Фермăра сыснасене пăхассипе тата тăрантарассипе малта пыракансен технологийĕне анлăн усă кураҫҫĕ. Кунпа пĕрлех иртнĕ ҫул фермăра сысна ашĕ туса илессине унчченхи ҫулхинчен 39 процент ӳстерме пултарнă, пĕтĕмпе 112,7 тонна аш-какай туса илнĕ, 281 пуҫ ăратлă вылăх сутнă.*

Йышăну

## Лару – апрелĕн 23-мĕшĕнче

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2008 ҫулхи апрелĕн 17-мĕшĕнчи 24 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 25-мĕш ларăвне район администрацийĕн ларусен залĕнче апрелĕн 23-мĕшĕнче пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма ҫак кун йĕркине сĕннĕ:

– «Муркаш районĕнче потребительсен рынокне 2008–2010 ҫулсенче аталантарасси ҫинчен» районăн тĕллевлĕ программи ҫинчен;

– «Муркаш районĕнче вĕрентӳ ĕҫне 2007–2010 ҫулсенче аталантарасси ҫинчен» районăн тĕллевлĕ программи ҫинчен;

– Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн администраци пуҫлăхĕн тивĕҫĕсене пурнăҫлама конкурс иртересси положенине ҫирĕплетесси ҫинчен;

– Муркаш район бюджетне 2007 ҫулта пурнăҫлани ҫинчен;

– депутатсен районти Пухăвĕн 2007 ҫулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи С-22/3, 2007 ҫулхи октябрĕн 26-мĕшĕнчи С-21/7, 2007 ҫулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнчи С-22/8, 2003 ҫулхи сентябрĕн 26-мĕшĕнчи С-17/5 №№ йышăнăвĕсене улшăнусем кĕртесси ҫинчен;

– Муркаш районĕнчи пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхăн муниципаллă унитарлă предприятийĕсен мунча услугисен тарифĕсене ҫирĕплетесси ҫинчен;

– депутатсен районти Пухăвĕн хăш-пĕр йышăнăвĕсем хăйсен вăйне ҫухатни ҫинчен;

– наградăлама тăратасси ҫинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсене, учреждениесен ертӳҫисене, район администрацийĕн пайĕсемпе управленисен пуҫлăхĕсене, депутатсен районти Пухăвĕ ҫумĕнчи ҫамрăксен парламенчĕн представителĕсене чĕнеҫҫĕ.

Тимлĕ пулăр!

## Ултавҫăсен аллине лекер мар

Ҫурлатри ялĕнче ют ҫынсем ҫак ял ҫыннисене 3 пин тенкĕпе магнит пиҫиххисем сутнă тенине илтрĕмĕр. Хăйсемпе социаллă работниксем тесе паллаштарнă. Хăйхи пиҫиххи тĕрлĕ чирчĕртен сиплет имĕш.

Редакцие кун пирки ЧР Сывлăх сыхлавĕн министерствин Муркаш районĕпе ĕҫлекен пайĕн ертӳҫи Н.П. Петрова ҫапла пĕлтерчĕ:

– Социаллă работниксем укҫалла пĕр япала та сутма пултараймаҫҫĕ. Ку е вăл акци иртерес пулсан эпир ҫакăн ҫинчен маларах пĕлтеретпĕр. Ҫынсем патне вырăнти ял администрацийĕсен представителĕсемпе тухма тăрăшатпăр. Пулăшу ĕҫне социаллă работниксем тӳлевсĕр тăваҫҫĕ.

Ултавҫăсен серепине лекес мар тесен тимлĕрех пулмалла.

Официально

## Состоялись публичные слушания

16 апреля 2008 года состоялись публичные слушания по проекту решения Моргаушского районного Собрания депутатов «Об исполнении районного бюджета Моргаушского района за 2007 год» и приняты следующие рекомендации:

1. Одобрить проект решения Моргаушского районного Собрания депутатов «Об исполнении районного бюджета Моргаушского района за 2007 год».

2. Рекомендовать Моргаушскому районному Собранию депутатов принять решение «Об исполнении районного бюджета Моргаушского района за 2007 год» в установленном порядке в соответствии с требованиями законодательства Российской Федерации и Чувашской Республики.

Анлă форум

## В. Путин «Единая Россия» партие ертсе пырать

Тунти тата ытлари кунсенче Мускавра «Единая Россия» партин 9-мĕш съезчĕ ĕҫлерĕ.

Съезд парти председателĕн должноҫне йĕркелерĕ.

В. Путин Раҫҫей правительствин пуҫлăхĕ пуласси вăрттăнлăх мар. Ҫакă Д. Медведев президента ларнă хыҫҫăн пулса иртмелле.

Ҫапла вара съездăн иккĕмĕш кунĕнче В. Путина «Единая Россия» парти председательне суйлани те ăнсăртран мар. Ҫак парти иртнĕ суйлавра В. Путин ячĕпе ҫĕнтерчĕ. Унăн ячĕ парти списокĕнче пĕрремĕш номерпе тăчĕ.

Ытти аталаннă ҫĕршывсенче суйлавра ҫĕнтернĕ парти правительство йĕркелет. Ҫапла вара В. Путин парти ертӳҫи пулни те, правительство пуҫлăхĕ пулни те килĕшӳллĕ.

ЧР Президенчĕ Н. Федоров ҫак партин Аслă Канашĕн членĕ пулнă май, съезд ĕҫне хутшăнчĕ. Вăл ҫакна палăртнă:

«Раҫҫейре хăватлă, килĕшӳллĕ тата логикăпа килĕшсе тăракан парти институтне йĕркелесси вĕҫленчĕ. Наци лидерĕ Владимир Путин чи вăйлă, чи яваплă партие ертсе пыма тытăнчĕ. Ҫакă халăх ирĕкĕпе влаҫ институчĕн пĕрлехи килĕшӳлĕхне ҫирĕплетме май пачĕ.

Раҫҫей Федерацийĕн политика сцени ҫинче пулса иртекен пулăмсем Чăваш Республикине ăнăҫлă аталанма, пирĕн умра тăракан стратеги тĕллевĕсене лайăхрах тата тухăҫлăрах пурнăҫлама меллĕ. В.В. Путин тата Д.А. Медведев тухса каланисем халĕ эпир Чăваш Республикинче туса пыракан ĕҫсемпе пĕр килеҫҫĕ. Ҫакă Чăваш Енре тата Раҫҫейре, федерацие регион шайĕнче тĕрĕс политика тытса пынине, унăн тухăҫлăхĕ пысăк пулнине тепĕр хут ҫирĕплетет».

Тирпей-илем кĕртмелли уйăхлăх

## Хамăр пурăнакан вырăна таса тытни – хамăра хисеплени

Ака уйăхĕн 10-мĕшĕнчен пуҫласа ҫу уйăхĕн 10-мĕшĕччен районта йывăҫ лартассипе тата ялсене тирпей-илем кĕртессипе уйăхлăх пырать. Эпир те уйăхлăха активлă хутшăнас терĕмĕр. Чамăш ялĕнче субботник иртересси ҫинчен пĕлтерӳ ҫакса тухрăмăр.

Ял ҫыннисем виҫĕ кун хутшăнчĕҫ урамсене тирпей-илем кĕртме. Чи малтан хăйсен умĕсене тасатрĕҫ. Тĕрлĕ ҫӳп-ҫап ҫунтарчĕҫ. Ҫунманнисене ҫĕр ăшне пытарчĕҫ. Ял хапхине те юсама манмарĕҫ. Машина чупнă ҫулсене кĕреҫепе тикĕслерĕҫ, хăйăр сапрĕҫ, вак кирпĕч сарчĕҫ. Пĕтĕмпе тăватă машина кирпĕч ватки кĕрсе кайрĕ. Г.Т. Васильев, И.И. Вершков, М.А. Ершов, П.И. Сидюшкин тăрăшуллă пулнине палăртмалла.

Кашни ҫулах Афанасий Данилов пенсионер юлташĕсемпе йывăҫсем лартать. Кăҫал та чылай йывăҫ лартса хăварчĕ. Герман Васильев та йывăҫсем чĕртме юратать. Ремневсем ҫул хĕррипе лартнă йывăҫсем те илемлĕн курăнса лараҫҫĕ.

Яла тирпейлеме шкул ачисем те хастаррăн хутшăнчĕҫ.

Пирĕн ялта чечек ӳстерме юратакан ҫынсем те сахал мар. Кил умне ҫапла майпа илемлĕрех тума тăрăшаҫҫĕ. Тирпейленĕ картасенче сарă нарциссем аякранах курăнса ларма пуҫларĕҫ.

Хамăр пурăнакан вырăна таса тытни хамăра хисеплени пулать. Ҫакна пирĕн ял ҫыннисем аван ăнланаҫҫĕ.

**И. СКВОРЦОВА.**

Чамăш ялĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ

## Ыйтусем тупăнсах тăчĕҫ

Юн кун республикăра пĕрлехи информаци кунĕ пулса иртрĕ. Ҫавна май пирĕн района Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ертӳҫи В.К. Тихонов, РФ ПФ Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ертӳҫи Р.А. Кондратьева, РФ Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕн ертӳҫи Л.П. Морозов, Мускав патшалăх уҫă университечĕн Шупашкарти институчĕн директорĕ А.П. Акимов, РФ Социаллă страховани фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн правоыйтăвĕсемпе ĕҫлекен пайĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ А.А. Кузьмин килчĕҫ. Малтанах вĕсем район пуҫлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕҫ. Юрий Александрович вĕсене районти ĕҫ-хĕлпе паллаштарчĕ, ҫывăх вăхăтрах татса памалли ыйтусем ҫинче чарăнчĕ. Унтан информаци кунне хутшăнакансем виҫĕ ушкăна пайланса районта пурăнакансемпе тĕл пулчĕҫ. Хальхинче тĕл пулусенче Чăваш Республикинчи вĕрентӳ ĕҫне 2040 ҫулччен аталантармалли стратеги, ҫурхи ака-суха ĕҫĕсене иртересси, тирпей-илем, право йĕркине сыхласипе туса иртермелли профилактика ĕҫĕсем ҫинчен тата ытти темăсемпе калаҫрĕҫ, тĕл пулусенче ҫавăн пекех ыйтусем ҫине хуравларĕҫ.

Л.П. Морозов, А.А. Кузьмин, ҫавăн пекех район администрацийĕн пурлăх тата ҫĕр хутшăнăвĕсен пай ертӳҫи А.В. Петров Йӳҫкасси ял тăрăхне ҫитсе килчĕҫ. Чи малтанах вĕсем Йӳҫкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта пулчĕҫ. Шкул директорĕ Ю.С. Яковлев коллектив ĕҫĕпе паллаштарчĕ. Чăваш Республикин Президенчĕн «Чăваш Республикинчи вĕрентĕве аталантармалли стратеги ҫинчен» Указне сӳтсе явнă май Юрий Семенович шкулти вĕрентӳ системине аталантарас ĕҫе асăннă документпа шайлаштарса ҫĕнетӳсем кĕртессине палăртрĕ. Юлашки ҫулсенче шкулсене пурлăхпа техника тĕлĕшĕнчен пуянлатассипе ырă улшăнусем пулнине палăртрĕ директор. Иртнĕ ҫул республика бюджетĕнчен юсав ĕҫĕсем иртерме 300 пин тенкĕ укҫа панă. Ҫавăн пекех шкул хăйĕн укҫи-тенкинчен 1 миллиона яхăн сумăпа усă курчĕ. Шкула ҫавăн пекех вĕрентӳ оборудованийĕ, 1 класс валли сĕтелпукан тата ытти килнĕ.

Ачасен канăвне йĕркелессипе те палăрмăлă утăмсем куҫ умĕнчех. Иртнĕ ҫул кунти шкул ҫумĕнчи сывлăха ҫирĕплетмелли лагерьте 30 ача каннă пулсан, кăҫал 50 ачан канăвне усăллă йĕркелеме палăртаҫҫĕ ҫак лагерьте.

Йӳҫкассинчи «Василек» ача сачĕн коллективĕпе тĕл пулнинчен вара ҫакă курăнчĕ: укҫа-тенкĕпе ҫыхăннă ыйтусем кунта ҫук мар.

– Юлашки ҫулсенче шкулсене патшалăх пулăшни яр уҫҫăнах курăнать. Хальлĕхе ача сачĕсем ку енĕпе айккинче юлаҫҫĕ. Патшалăх ача сачĕсене те укҫа-тенкĕпе пулăшасса шанса пурăнатпăр, – терĕҫ кунта ĕҫлекенсем. Ача сачĕн ҫивиттине юсамалла кунта. Укҫине ăҫтан тупмаллине хальлĕхе пĕлмеҫҫĕ-ха.

Ветерансемпе инвалидсен ҫуртĕнче кунти коллективпа тата кунта пурăнакан ватă ҫынсемпе калаҫу иртерчĕҫ. Ыйтусем кунта ытларах ҫĕр ыйтăвĕсемпе, путевкăсем илессипе ҫыхăннăскерсем пулчĕҫ. Пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансем вĕсем ҫине туллин хуравларĕҫ.

**Л.ПАВЛОВА.**

Юбилей

## Саламлатпăр

Поздравляем **АНДРЕЕВУ Зинаиду Викторовну** с юбилеем - 55 летием.



Мамочка милая, нежная, славная,  
Добрая, умная и лучезарная.  
В ладонях я счастье тебе подарю,  
Спасибо за все, я тебе говорю.  
Живи, улыбайся невзгодам-годам,  
Заботы разделим с тобой пополам.  
Забудь о болезнях, тревогах забудь.  
Любовью осветим твой жизненный путь.  
Тебя мы, мама, поздравляем,  
И вновь за все благодарим.

Нас всех ты, мама, воспитала,  
Благословила нашу жизнь.  
Живи, родная, долго-долго,  
И будь здоровой, не болей,

Пусть здравствует на свете мама,  
Поднявшая своих детей.

**Дети, внуки.**



Хисеплĕ, чи хаклă та чунтан юратнă аннене, ăшă кăмăллă асаннене, кукамая, хунямана, хаклăран та хаклă тăванăмăра – Шетмĕпуҫ ял тăрăхне кĕрекен Шетмĕпуҫ ялĕнче пурăнакан **Фекла Кузьминична СОЛОВЬЕВАНА** апрелĕн 20-мĕшĕнче 75 ҫул тултарнă ятпа чунчĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-ҫул, тулли телей, ҫирĕп сывлăх сунатпăр. Ҫирĕп сывлăхпа татах та нумай ҫул ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

Хаклăран та хаклă аннемĕр, эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра ҫав тери телейлĕ туятпăр. Таймa пуҫ сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хĕтипе тăхлачисем, пускилсем тата ҫывăх тăванĕсем.**